25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 30 ЭРНЕКУН 254 (6189) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем! Совет влаҫӗн 25 ҫулӗ хушшинче эсир социализмлӑ индустриллӗ тата колхозсемлӗ хӑватлӑ держава туса хутӑр. Хӑвӑр нумай ҫул хушши ӗҫлесе тунӑ ҫитӗнӳсене мӗнпур вӑя хурса хӳтӗлӗр! *(Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV ҫул тултарнӑ тӗле ЦК ВКП(б) кӑларнӑ лозунгсем)*

Парти ретне ӳстересси тата ҫамрӑк коммунистсене вӗрентсе ҫитӗнтересси—парторганизацисен ответлӑ задачи

Парти ретне ӳстерессипе тата ҫамрӑк коммунистсене вӗрентсе ҫитӗнтерессипе—парти организацийӗсен ӗҫӗнче яланах тӗп вырӑнта тӑнӑ. Халӗ, халӑхӑн мӗнпур вӑйне тӑшмана ҫӗнтерме мобилизациленӗ вӑхӑтра, ҫак ӗҫсем ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

Тӑван ҫӗршыв умне тухса тӑнӑ хӑрушлӑх татах та ҫивӗчленчӗ. Тискер те ирсӗр тӑшман Атӑла, Сталинграда, Ҫурҫӗр Кавказа хӑратса тӑрать. Юнлӑ тӑшманӑн ҫулне пӳлсе лартмалла, ӑна пӗтерсе тӑкмалла, совет ҫӗрӗ ҫинчен тасатмалла!

Ҫӗршыв ҫак йывӑр та хӑрушӑ кунсене пурӑнса иртгернӗ вӑхӑтра совет халӑхӗ большевикла парти тавра татах та таччӑнрах пӗтӗҫрӗ. Ҫакна халӑхӑн мухтавлӑ ывӑл-хӗрӗсем вӑрҫӑ кунӗсенче Ленин—Сталин парти ретне йышлӑн кӗни те уҫҫӑн кӑтартса парать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче Чӑваш республикинчи парти организацийӗсем хӑйсен ретне производствӑра малта пыракан ҫӗршер рабочисене, колхозниксене тата служащисене илнӗ. 1942 ҫулти июль, август тата сентябрь уйӑхӗсенче ҫеҫ республикӑра парти членӗсемпе кандидачӗсен йышне 459 ҫын хутшӑннӑ. Ҫавна май хуласенчи тата ялсенчи парторганизацисем чылай ӳснӗ. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи парторганизаци, сӑмахран, кӑҫалхи 9 уйӑх хушшинче парти ретне 104 ҫынна, Шӑхасан районӗнчи парторганизаци — 83 ҫынна илнӗ. Колхозсенчи хӑшпӗр пуҫламӗш парторганизацисене юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче ҫеҫ 5—6-шар ҫын хутшӑннӑ.

Парти ретне ҫӗнӗ юлташсене илес ӗҫе тивӗҫлипе туса пыман парторганизацисем те пур-ха. Октябрьски районри парти организацийӗ кӑҫалхи 9 уйӑх хушшинче парти членне 9 ҫынна, парти членӗн кандидатне 5 ҫынна ҫеҫ илнӗ. Ишлей районӗнчи 12 парторганизацирен 5-шӗ ҫеҫ партие илес ыйтупа ӗҫленӗ. Ишлей районӗнчи «Клевер» колхозри, Октябрьски районри Покровскинчи территориллӗ парторганизацисем вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа парти ретне пӗр ҫынна та илмен.

Асӑннӑ парти организацийӗсем ӗҫҫыннисем хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе ҫителӗксӗр туса пынӑ, пирӗн халӑхӑн политикӑллӑ тата производствӑллӑ вӑйлӑ ҫӗкленӗвӗпе парти речӗсене ӳстерес ҫӗрте усӑ курма пултарайман.

Парторганизацисем рядовой рабочисене, хӗрарӑмсене тата комсомолецсене парти ретне илес тӗлӗшпе уйрӑмах начар ӗҫлеҫҫӗ. Промышленноҫпа транспорт предприятийӗсенче юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче парти ретне 168 ҫынна илнӗ, вӑл шутран тӗп профессисемпе ӗҫлекен рабочисем пӗтӗмпе те 28 ҫын ҫеҫ. Канашпа Улатӑр хулисенчи парти организацийӗсем сентябрь уйӑхӗнче пӗр рабочие те парти ретне илмен. Рабочисене парти ретне илес ӗҫ Ҫӗмӗрлепе Куславкка районӗсенче те ҫителӗксӗр пулса пырать.

Хӗрарӑмсемпе комсомолецсем халӗ халӑх хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче йышлӑн ӗҫлеҫҫӗ, предприятисене, цехсене, колхозсене, ялсоветсене ертсе пыраҫҫӗ. Комсомолецсемпе хӗрарӑмсем халӗ производствӑра тӗп вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа комсомолецсемпе хӗрарӑмсене парти ретне илесси ҫине халӗ уйрӑмах тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Анчах Ишлей, Комсомольски, Калинински, Етӗрне районӗсенчи тата Улатӑр хулинчи парторганизацисем хӗрарӑмсем хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе сӳрӗккӗн туса пыраҫҫӗ-ха. Партин Ишлейпе Комсомольски районӗсенчи организацийӗсем кӑҫалхи 9 уйӑх хушшинче парти ретне 2 хӗрарӑма ҫеҫ илнӗ. Улатӑрти паровозсем юсакан заводри, Улатӑр станцинчи пуҫламӗш парторганизацийӗсем ҫулталӑк хушшинче пӗр хӗрарӑма та парти ретне илмен. 1942 ҫулта парти ретне Октябрьски районра 2 комсомолеца, Комсомольски районра 3 комсомолеца, Первомайски районра 5 комсомолеца ҫеҫ илнӗ. Кӑҫал Улатӑр хулинче те парти ретне 11 комсомолеца ҫеҫ илнӗ.

Ку ӗҫри чӑрмав хӑшпӗр парти организацийӗсем партие кӗрес текенсен ыйтӑвӗсем ҫине бюрократла пӑхнинчен, парти докуменчӗсене парассине вӑраха тӑсса пынинчен те нумай килнӗ. Улатӑр районӗнче, сӑмахран, Андреев юлташ кӑҫалхи июлӗн 6-мӗшӗнче хӑйне парти членӗн кандидатне илме ыйтса заявлени панӑ. Унӑн заявленине пуҫламӗш парторганизаци 40 кун иртсен ҫеҫ пӑхса тухнӑ, пуҫламӗш парторганизацин решенине ВКП(б) райкомӗ тепӗр 42 кунран ҫеҫ ҫирӗплетнӗ. Унта ҫавӑн пекех Рябов юлташӑн заявленийӗ те пӑхса тухмасӑр икӗ уйӑх ҫурӑ хушши выртнӑ. ВКП(б) Красноармейски райкомӗ 1942 ҫулӑн виҫҫӗмӗш кварталӗнче парти ретне илнӗ 7 ҫынна октябрӗн 15-мӗшӗччен парти докуменчӗсем памасӑр тӑнӑ.

Кандидатран члена куҫмалли тапхӑр ҫамрӑк коммунистӑн пурнӑҫӗнче паллӑ событи пулса тӑрать. Парти организацийӗсен ҫав вӑхӑтра парти членӗн кандидатне члена куҫма хатӗрлесе ҫитермелле: ӑна парти ӗҫне явӑҫтармалла, партиллӗ порученисем памалла, ҫав порученисене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине, вӑл идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен хӑйӗн пӗлӗвне мӗнле ӳстерсе пынине, ҫамрӑк коммунистӑн личнӑй пахалӑхне тӗрӗслемелле.

Анчах хӑшпӗр парторганизацисен ӗҫӗнче час-часах тепӗр майлӑ пулса тухать: ҫӗнӗ юлташа парти членӗн кандидатне илеҫҫӗ те унӑн ҫинчен вара пачах манса каяҫҫӗ. Пуҫламӗш парторганизацисемпе парти бюровӗсен секретарӗсем ҫамрӑк коммунистӑн кандидатра тӑмалли стажӗ иртсен, ӑна парти членне куҫарма вӑхӑт ҫитсен тин ун ҫинчен аса илеҫҫӗ. Шупашкар районӗнче, сӑмахран, килхуҫи арӑмӗ Е. Васильева юлташа 1940 ҫулти май уйӑхӗнче парти членӗн кандидатне илнӗ. Ӑна общественлӑ тата партиллӗ ӗҫсене явӑҫтарман, партиллӗ порученисем те паман. Васильева юлташа унӑн кандидатра тӑмалли стажӗ иртни ҫинчен аса илтерсен, вӑл ҫапла ответленӗ: «Пӗлетӗп, манӑн парти членне куҫма вӑхӑт ҫитнӗ ӗнтӗ, анчах эпӗ партиллӗ ӗҫе нимӗн чухлӗ те хутшӑнман-ҫке, апла пулсан, парти членне кӗме хатӗрленсе ҫитнине мӗнле тӗрӗслеме пултарӑр-ши?»—тенӗ. Ҫамрӑк коммунистсене вӗрентсе ҫитӗнтерес, вӗсен идейӑпа политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес ӗҫсем ҫине ответсӑррӑн пӑхнӑ пирки, Шупашкар районӗнчи парти организацийӗнче стаж тухнӑ парти членӗн кандидачӗсен хисепӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чакас вырӑнне, чылай ӳснӗ. Унта отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн пуҫламӗшӗнче стаж тухнӑ кандидатсем 9 ҫын пулнӑ, халӗ вӗсен хисепӗ 29 ҫынна ҫитнӗ.

Парти ретне ӳстерес, ҫамрӑк коммунистсене вӗрентсе ҫитӗнтерес тӗлӗшпе ВКП(б) райкомӗсемпе партин хуласенчи комитечӗсен оргинструкторски отделӗсем вӑйлӑн ӗҫлемелле. ВКП(б) хӑшпӗр райкомӗсем ҫав отделсен ӗҫне вӑйлатасси ҫине ку таранччен ответсӑрла пӑхаҫҫӗ-ха. Вӗсем оргинструкторски отделра ӗҫлеме тивӗҫлӗ инструкторсем тупса ҫитермеҫҫӗ, отдел заведующийӗсене час-часах нумай сроклӑха, пачах та урӑх ӗҫсемпе командировкӑсене ярaҫҫӗ. ВКП(б) Сӗнтӗрвӑрри райкомӗн оргинструкторски отделӗнче, сӑмахран, штатпа пӑхнӑ тӑрӑх, 3 инструктор пулмалла. Унта халӗ пӗр инструктор ҫеҫ, ӑна та ВКП(б) райкомӗ август уйӑхӗн пуҫламӗшӗнчех чугунҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлеме командировкӑна янӑ.

Партие совет халӑхӗн малта пыракан ывӑл-хӗрӗсем кӗреҫҫӗ. Вӗсене парти ретне хӑюллӑнах йышӑнмалла. Хӑйсем Ленин—Сталин партийӗн ӗҫне чӗререн парӑннине ӗҫре кӑтартса панӑ юлташсемшӗн парти ретне кӗмелли ҫулсем уҫӑ. Парти ретне ӳстерес тата ҫамрӑк коммунистсене вӗрентсе ҫитӗнтерес ӗҫре ку таранччен пулнӑ ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтермелле. Ҫамрӑк коммунистсем хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе вӑйлатмалла, вӗсен идейӑллӑ шайне ӳстермелле, вӗсене большевиксен партин историне, Ленин—Сталин произведенийӗсене вӗрентсе марксизм-ленинизм теорийӗпе ҫирӗппӗн хӗҫпӑшаллантармалла—ҫакӑ вӑл парторганизацисен пысӑк та ответлӑ задачи.

Аслӑ уява хатӗрленеҫҫӗ

КАЛИНИНО. Алгазинӑри туллимар вӑтам шкулти учительсемпе вӗренекенсем Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарнине уявласа иртерме тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ. Вӗренекенсем Н. Айзман ҫырнӑ «Патриотсем» ятлӑ пьесӑна хатӗрлеҫҫӗ, юрӑсемпе сӑвӑсем вӗренеҫҫӗ.

Асакассинчи туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем, Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, «отлично» тата «хорошо» паллӑсемпе вӗренме, шкула пӗр кун сиктермесӗр ҫӳреме, дисциплинӑллӑ пулма обязательство илнӗ. 6-мӗш «А» класра вӗренекенсем Л. Белова, В. Мясников т. ыт. те ҫак обязательствӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ

Б. ШОРНИКОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Октябрӗн 28-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 28-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчик** районӗнче ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Октябрӗн 27-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 9 танкӗпе бронемашинине тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул тӑрӑх боеприпассем турттарса пыракан эшелона сирпӗнтерсе янӑ, артиллерин 6 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн пехотипе тата танкӗсемпе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Заводсен районӗнче нимӗҫсен пехотипе танкӗсем, авиаци пулӑшса тӑнипе, пирӗн тӗреклетнӗ пунктсене темиҫе хутчен те атакӑланӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсен атакисене сирсе янӑ. Пӗр участокра кӑна противник пӗр 100—200 метр малалла кайнӑ. Нимӗҫсен пӗр рота мотопехоти пӗр заводӑн кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ тулашне ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ, ӑна унта пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫура противник пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Артиллеристсемпе минометчиксем пенипе тата пирӗн авиаци ҫапӑҫнипе нимӗҫсен пехотине 12 рота вӗлерсе пӗтернӗ, 30 танка ҫити тата 90 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, минометсен 17 батарейине тата артиллерин 18 батарейине пусарса лартнӑ. Пирӗн летчиксемпе зенитчиксем нимӗҫсен 15 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре ҫак кунсенче пирӗн часть йышӑннӑ халӑх пурӑнакан пӗр пункт районӗнче противник ҫӗнӗрен 8 атака тунӑ. Пирӗн боецсем хӑйсен позицисене хӳтӗлесе хӑварнӑ, румынсен салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ҫити вӗлерсе тӑкнӑ. Туманов юлташӑн подразделенийӗнчи артиллеристсем тӑшман миномечӗсен пӗр батарейине пӗтерсе лартнӑ тата 90 гитлеровеца вӗлернӗ. Н-ски чаҫӑн снайперӗсем виҫӗ кун хушшинче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ытла вӗлернӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре противник, хӑйне пулӑшма ҫӗнӗ вӑйсем илсе пынӑ хыҫҫӑн пӗр высотана атакӑланӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсем хӗснине кункаҫа чарса тӑрса, вӗсене вӑйсӑрлатнӑ тата хӑйсем контратака пуҫласа янӑ. Ҫапӑҫура 200 гитлеровеца ытла вӗлерсе тӑкнӑ. Сердюк сержантӑн пулемет расчечӗ оборонӑн малти линийӗ тӗлӗнче нимӗҫсен 2 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нальчик районӗнче пирӗн войскӑсем наступлени пуҫланӑ противникпа ҫапӑҫнӑ. Пӗр участокра гитлеровецсем танксемпе тата пехота вӑйӗсемпе ҫапӑҫса пирӗн подразделенисене пӑртак каялла чакарнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем нимӗҫсен атакисене сирсе тӑрса противника пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Пирӗн летчиксем нимӗҫсен 5 танкне, 30 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 2 самолетне персе ӳкернӗ тата аэродромсем ҫинче 7 самолет пӗтернӗ.

* * *

Минск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ пӗр чугунҫул станцине ҫунтарса янӑ, ун чухне нимӗҫсен 30 вагонлӑ эшелонӗ тӑнӑ.

Орел облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ противникӑн чугунҫулпа пыракан поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз, танксем тиенӗ 7 платформа тата боеприпассем тиенӗ 8 вагон ванса кайнӑ.

Украинӑри партизансен отрячӗ нимӗҫсен чугунҫулпа пыракан 2 эшелонне сирпӗнтерсе янӑ, 26 вагон ванса кайнӑ.

* * *

Франц Гален салтак патне нимӗҫ ефрейторӗ Губерт Шгоскен ҫырнӑ ҫырӑва тупнӑ. Ҫырура ҫапла каланӑ: «Сталинград йӗри-тавра халӗ те ҫапӑҫу пырать. Пӗр участокра дивизи 100 танка, ҫӗре алтса лартнӑскерсене, хӑварнӑ. Эпӗ нихҫан та Сталинград сывӑхӗнчи пек положенире пулман. Ӗнер ротӑна салатса ячӗҫ. Унта пурӗ те 17 ҫын ҫеҫ юлнӑ, вӗсенчен 12 ҫынна хӑранӑшӑн тата каялла чакнӑшӑн тӗрмене хупмалла тунӑ. Пӗррӗмӗш батальонра унтан та сахалтарах юлнӑ».

* * *

Сумы облаҫӗнчи Глуховски районри 4.500 хӗрарӑма тата хӗрачасене гитлерла мерзавецсем Германие каторгӑна хӑваласа кайнӑ. Ҫак районри 7 ялти 39 колхозницӑна, нимӗҫсен чуралӑхне кайма килӗшменскерсене, нимӗҫ полицейскийӗсем ҫакса тата персе вӗлернӗ.

* * *

Польша патриочӗсен отрячӗ, Жешува сывӑхӗнчи чугунҫул станцийӗ ҫине тапӑнса, охранӑна вӗлерсе пӗтернӗ, нимӗҫсен ҫар эшелонне сирпӗнтерсе янӑ.

Октябрӗн 29-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 29-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, ҫавӑн пекех тата **Нальчик** районӗнче ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн атакисене сирсе тӑнӑ. Нимӗҫсен пехотин батальонӗ завод районӗнче пирӗн позицисене атакӑланӑ. Пирӗн боецсем, пӑшалсемпе пулеметсенчен персе, гитлеровецсене малтанхи позицисем патнех сирсе пӑрахнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн ҫӗр ытла вилли выртса юлнӑ. Хулан кӑнтӑрти хӗрринче лейтенант Гладких юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсен группи тӑшманӑн оборона тумалли районне ҫӗрле пырса тапӑннӑ. Оборонӑн малти хӗрри урлӑ систермесӗр шӑвӑнса каҫса, пирӗн боецсем противникӑн дзочӗсем патне пырса ҫитнӗ. Гранатӑсемпе 7 дзота тата 10 землянкӑна сирпӗнтерсе ярса, красноармеецсем штык вӗҫҫӗн тӑрса ҫапӑҫса 70 гитлеровеца вӗлернӗ те хӑйсен чаҫне ӑнӑҫлӑн таврӑннӑ. Красноармеец Кузнецов юлташ тата сержант Репа юлташ противотанковӑй пӑшалсенчен персе нимӗҫсен 2 самолетне ӳкернӗ.

Капитан Шутов юлташ командир пулса ертсе пыракан 6 летчик-истребитель нимӗҫсен 15 самолетне атакӑланӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫура совет летчикӗсем тӑшманӑн 4 самолетне персе антарнӑ. Пӗтӗмпе пӗр талӑк хушшинче нимӗҫсен 15 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Н-ски чаҫӑн боецӗсем, тӑшмана пӗр высота районӗнче атакӑласа, противникӑн 16 дзочӗпе блиндажне, 6 пулеметне, 4 минометне тата 2 противотанковӑй орудине тытса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсен пехотине 2 ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра контратакӑна куҫнӑ гитлеровецсене пирӗн боецсем вӑйлӑн персе чарса лартнӑ. Нимӗҫсен 2 танкне ҫӗмӗрнӗ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 120 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, шоссе ҫулӗн районӗнче, противникӑн чылай пысӑк вӑйӗсем пирӗн позицисене атакӑлама хӑтланнӑ. Пирӗн подразделенисем, артиллерирен тата минометсенчен персе нимӗҫсен боевой йӗркисене салатса янӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн совет пехоти контратакӑна ҫӗкленнӗ. Гитлеровецсем ҫапӑҫу хирне хӑйсен вилнӗ тата аманнӑ салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ытла пӑрахса хӑварса каялла чакнӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсенне сӑрт-ту хушшинче пемелли икӗ оруди, 8 пулемет тата 3 миномет тытса илнӗ.

* * *

Нальчик районӗнче пирӗн чаҫсем тӑшмана хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫнӑ. Пӗр высота районӗнче нимӗҫ автоматчикӗсем пирӗн оборона ӑшне савалланса кӗме пултарнӑ. Н-ски чаҫӑн подразделенийӗсем гитлеровецсене сапаласа янӑ, анчах та противникӑн ҫав вырӑна пырса ҫитнӗ йышлӑрах вӑйӗсем хӗснипе пирӗннисем оборонӑн ҫӗнӗ рубежӗсем патне куҫнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем, противникӑн атакисене сирсе тӑрса, нимӗҫсен 2 танкне тата пехотине 2 ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Воронеж районӗнче разведка тӑвакан отрядсем активлӑн кӗрешнӗ. 8 боец, Соин юлташ ертсе пынипе, противникӑн траншейи патне систермесӗр шӑвӑнса ҫитнӗ те траншея ҫине гранатӑсем вӑркӑнтарнӑ. Нимӗҫсем хирӗҫ тӑма хӑтланнӑ, анчах вӗсене штык вӗҫҫӗн тӑрса ҫапса аркатса пӑрахнӑ. Совет разведчикӗсем ҫав операци вӑхӑтӗнче 60 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Голландецсен «Нидерланды» ятлӑ легионӗнчен тыткӑна парӑннӑ салтак Жак Б. ҫапла каласа панӑ: «Луга хули сывӑхӗнче чугунҫул хӗрринче партизансем аркатса тӑкнӑ ҫӗмрӗк вагонсемпе паровозсем нумай йӑваланса выртаҫҫӗ. Продовольствипе снаряжени тата боеприпассем тиенӗ чугунҫул составӗсенчен ҫӳп-ҫаппа тимӗр-тӑмӑр куписем кӑна тӑрса юлнӑ. Ҫав районра кӗрешекен партизансене пусарма тата пӗтерсе тӑкма нимӗҫсен командованийӗ ятарласа батальон уйӑрнӑ. Вӑрманти ҫапӑҫусенче партизансем ҫав батальона ҫапса аркатнӑ. 800 ҫынран каялла пӗтӗмпе те 100 ҫын кӑна таврӑннӑ».

* * *

Германин чугунҫул транспорчӗ Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче аманнӑ нимӗҫ салтакӗсене, ҫавтери нумай шутланаканскерсене, турттарса ӗлкӗрме пултараймасть. Санитарнӑй поездсем станцисенче 5—8-шар кун тӑраҫҫӗ. Аманнисенчен нумайӗшӗсем госпитале кайнӑ чухне ҫул ҫинчех вилеҫҫӗ. Октябрь уйӑхӗнче Прагӑна санитарнӑй поезд ҫитнӗ, вӑл ҫул ҫинче 28 кун пулнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче аманнисенчен 350 ҫынран 100 ҫын ытла вилнӗ. Октябрӗн 4-мӗшӗнче Сталинградран Варшавӑна аманнӑ салтаксемпе лӑках тултарса лартнӑ тавар вагонӗсен составӗ пырса ҫитнӗ. Вагонсенчен ҫул ҫинче вилнӗ 210 салтакӑн виллине кӑларнӑ.

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ малалла ҫапӑҫса пынӑ. Фашистсем пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Гитлеровецсене совет танкисчӗсем вӑйлӑн пыра-пыра ҫапаҫҫӗ.

Н-ски танковӑй часть пехотӑна хӳтӗлесе тӑнӑ. Пирӗн боецсем, броньӑллӑ машинӑсен хӳттипе тӑшманӑн ҫирӗплетнӗ линийӗ патне сывӑхах ҫитсе, нимӗҫсен оборони ӑшне ҫиҫӗмӗн вӑркӑнса кӗрсе кайма хатӗрленнӗ. Противник, ӑна пирӗннисем пырса ҫапасса пӗлсе, ҫав вырӑна хӑйӗн резервӗсене куҫарса пынӑ. 200 машинӑна яхӑн пӗр чарӑнмасӑр каялла-маялла ҫӳренӗ. Вӗсем фронт линийӗ патне нимӗҫсен пехотине тата противотанковӑй хатӗрсене турттарнӑ. Артиллери канонади лӑпланасса кӗтсе тӑмасӑр, совет танкӗсем атакӑна кӗрсе кайнӑ. Вӗсем хыҫӗнчен 200 метрта пирӗн пехота пынӑ. Тула лейтенантӑн танкӗ противникӑн блиндажӗсем ҫине ҫӗмӗрсе пынӑ. Ҫав блиндажсенчен фашистсем вӑйлӑн персе, пирӗн боецсене малалла кайма чӑрмантарса тӑнӑ. Нимӗҫсен укреплениййӗ ҫине улӑхса ҫитсен, хурҫӑ машина пӗтӗм вӑйпа кӗрлесе кайнӑ та, ҫав блиндажсене унти гитлеровецсемпе тата вӗсен хӗҫпӑшалӗпе пӗрлех лапчӑтса лартнӑ. Сывӑхри окопсенче ларакан нимӗҫсем совет танкӗ ҫине противотанковӑй пӑшалсемпе хаяррӑн пеме тытӑннӑ. Пирӗн машина хӑйӗн пӗтӗм хӑвӑртлӑхӗпе ҫавӑрӑннӑ та фашистсен бронебойщикӗсем ҫине атакӑна кӗрсе кайнӑ. Бронебойщиксем совет танкӗн гусеницисем айӗнче пӗри те чӗррӗн юлман. Совет машини нимӗҫсен укреплениййӗсем ҫине тӑватӑ хутчен кӗрсе каять, вӗсене аркатса тӑкать.

Ҫав хушӑра пирӗн пехота тӑшманӑн оборони патнех пырса ҫитет те фашистсемпе сывӑхран ҫапӑҫма тытӑнать.

Сылтӑм флангра фашистсен позицийӗсене Прохоровӑн йывӑр танкӗ атакӑланӑ. Ку вӑл ҫамрӑк лейтенантӑн пӗррӗмӗш ҫапӑҫӑвӗ пулнӑ. Ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче высота хыҫӗнчен сасартӑк противникӑн тӑватӑ танкӗ сиксе тухнӑ. Малта пыраканӗ Прохоров машининчен мӗнпурӗ те 15 метрта кӑна пулнӑ. Ҫамрӑк командир хӑюллӑ шухӑш тытать. Вӑл хӑйӗн машинин пӗтӗм вӑйӗпе пырса ҫапса, тӑшманӑн танкне ҫӗмӗрет, унтан тупӑпа персе фашистсен тепӗр машинине ҫӗмӗрсе пӑрахать. Тӑшманӑн ытти икӗ танкӗ тарса ҫӑлӑнма хӑтланаҫҫӗ, анчах совет танкӗнчен перекен тупӑ йӗтрисем вӗсене те чарса лартаҫҫӗ. Ҫапла умри ҫула тасатса, Прохоров пӗрре пуҫарса янӑ наступление малалла вӑйлатса пырать. Унӑн танкӗ хӳтӗленипе пехота ҫӗнӗрен атакӑна ҫӗкленет.

Чи хӗрӳ ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче старши лейтенантӑн Колесниченкӑн танкне тӑшман противотанковӑй тупӑсемпе персе ҫӗмӗрет. Танк хыҫӗнчен пыракан пехотинецсен ушкӑнӗ хӳтӗлӗхсӗр тӑрса юлать. Анчах та Колесниченко, хӑйӗн ҫӗмӗрӗлнӗ машини ҫине тӑшман вӑйлӑн пенине пӑхмасӑр, засадӑра пытанса ларнӑ тӑшманӑн артиллерисчӗсемпе хӑюллӑн ҫапӑҫать. Ҫав ҫапӑҫура вӑл тӗл те тӗл персе тӑшманӑнне 9 противотанковӑй оруди пӗтерсе тӑкать, 50 гитлеровеца вӗлерет. Унӑн танкӗнчи орудисем вӑйлӑн персе хӳтӗленипе пирӗн пехота тӑшманӑн блиндажӗсемпе окопӗсене вӑркӑнса кӗрсе каять.

Ҫав ҫапӑҫура пехотинецсемпе танкистсем, пӗр-пӗрне пулӑшса пырса, нимӗҫсен темиҫе танкӗпе бронемашинине, 53 противотанковӑй орудине, тӑватӑ полевой орудине, минометсен 5 батарейине, 30 станковӑй пулеметне, 33 дзотне, 3 наблюдательнӑй пунктне пӗтерсе тӑкнӑ тата 500 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

Г. МАКСИМОВ.

Танксен колоннисене тума

100.000 тенкӗ укҫа пухса пама йышӑнчӗҫ

ИШЛЕИ, октябрӗн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). Елчӗк районӗнчи трактористсем тӑван ҫӗршывпа фронта вӑйлӑн пулӑшас тӗлӗшпе танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума чӗнсе каланине Ишлей районӗнчи трактористсемпе трактористкӑсем, комбайнерсемпе ремонт тӑвакан рабочисем пысӑк хавхаланупа йышӑнчӗҫ.

Ку тӗлӗшпе ӗнер МТС-ра пуху пулса иртрӗ. Пухура трактористсемпе трактористкӑсем, комбайнерсем танксен «Тракторист Чувашии» ятлӑ колоннине тума 100.000 тенкӗ укҫа пухса пама йышӑнчӗҫ. Хӑйсен йышӑнӑвне вӗсем пуху иртсенех пурнӑҫлама пуҫларӗҫ. МТС-ӑн 9-мӗш номерлӗ трактор бригади танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 13.360 тенкӗ укҫа пухса панӑ. Бригадӑн бригадирӗ Ефимов юлташ 2700 тенкӗ пачӗ, тракторист М. Родионов юлташ 2.000 тенкӗ, трактористкӑсем Клавдия Ефимова 1.500 тенкӗ, Мария Сергеевӑпа Клавдия Сергеева юлташсем 1.100-шер тенкӗ пачӗҫ.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укҫа пухас ӗҫе МТС-ӑн пур бригадисем те активлӑн хутшӑнчӗҫ. 10-мӗш номерлӗ трактор бригади танксен колоннине тума пухурах 11.400 тенкӗ, 3-мӗш номерлӗ трактор бригади 10.200 тенкӗ, 1-мӗш бригада 7.000 тенкӗ, 4-мӗш бригада 4.600 тенкӗ пухса пачӗҫ. Трактористка-стахановка Мария Толстова танксен колоннине тума 1.500 тенкӗ укҫа панӑ.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума трактористсемпе трактористкӑсем ӗнер пурӗ 60.260 тенкӗ укҫа пухнӑ. Нумайӗш бригадӑсенче ку ӗҫ халӗ малалла пулса пырать.

Д. МИХАЙЛОВА.

3.000 тенкӗ пухса панӑ

ТӐВАИ. (Телефонпа). Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхоз членӗсем Октябрьти революци 25 ҫул тултарнӑ ятпа танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума чӗнсе калани ҫине районри колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫпе ответлеҫҫӗ. Ӗнер Вӑрманхӗрринчи «Красное Сормово» колхоз членӗсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура аслӑ уяв умӗн фронта пулӑшас ӗҫе вӑйлатасси ҫинчен сӳтсе-яврӗҫ. Колхозниксем пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 3.000 тенкӗ пухса пачӗҫ. Ҫак ӗҫре колхозри активистсем лайӑх пример кӑтартрӗҫ. Колхоз председателӗ Мукин юлташ 500 тенкӗ, колхозник Смирнов юлташ 300 тенкӗ, бригадир Григорьева юлташ 200 тенкӗ пачӗҫ. 60 ҫулхи старик А. Тимофеев юлташ та танксен колоннине тума 100 тенкӗ пачӗ.

В. ИЛЬИН.

Хамӑрӑн паттӑр воинсем валли

КУСЛАВККА. Районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем хатӗрлес ӗҫ кулленех вӑйланса пырать. Октябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсем патне районри ӗҫҫыннисем 75 кӗрӗк пиншак, 141 мулаххай, 55 мӑшӑр ҫӑм алшиш, 28 мӑшӑр носки, 22 фуфайка тата ытти ӑшӑ япаласем нумай ярса панӑ

Анчах та хӑшпӗр ялсовет исполкомӗсем ҫак питех те кирлӗ ӗҫе тивӗҫлипе ертсе пымаҫҫӗ-ха. Чашлама, Туканаш, Куснар, Ырашпулӑх ялсовечӗсенче Хӗрлӗ Ҫар валли ӑшӑ тумтирсем пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссисем саланса кайнӑ.

А. ШАРКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатмалла

ИЕПРЕÇ. Районри парторганизаци партиллĕ-политикăллă ĕçе отечественнăй аслă вăрçăн интересĕсене пăхăнтарса туса пырать. Колхозсен тата предприятисен руководителĕсем райцентрти парти активĕпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ.

Партипе правительствăн решенийĕсене чи малтан парти активĕнче, унтан парти пухăвĕсенче сӳтсе-яваççĕ. Çакăн хыççăн вăл решенисене кашни ĕççыннине çитерес тĕлĕшпе коммунистсемпе агитаторсем калаçусемпе докладсем ирттереççĕ. Çавăн пек докладсене кăçал районра пурĕ 140 ытла ирттернĕ.

ВКП(б) райкомĕ кăçал пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене пухса 3 хутчен канашлу ирттернĕ. Вăл канашлусенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленисене сӳтсе-явнă. Çав решенисем тăрăх, çураки вăхăтĕнче 12 пуçламĕш парторганизацинче пухусем ирттернĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, кăçал уборка вăхăтĕнче чылай пуçламĕш парторганизацисем партиллĕ-политикăллă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартрĕç, çавăнпа вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пычĕç.

Коммунист М. Егоров юлташ ертсе пыракан «Большевик» колхоз тырпулсене кĕске срокра пухса кĕртнĕ, государствăна тырă памалли плана районра чи малтан тултарнă. Колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 118 процент, сурăхсем енĕпе 135 процент тултарнă.

Колхоз производствинчи коммунистсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. «Красный металлист» колхозра эвакуаци йĕркипе килнĕ коммунистка Каимова юлташ утă çулнă тата тырă вырнă вăхăтсенче ĕç нормине 130—150 процент тултарса пынă. Буденный ячĕпе тăракан колхозри коммунист Крумин юлташ, 60 çултан иртнĕскер, кăçал 125 ĕçкунĕ тунă. Колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Кодинов тата унти коммунистсем Гринберг, Сергеева юлташсем ĕç нормине тăтăшах 150—200-шер процент тултараççĕ. Хăйсен пархатарлă ĕçĕсемпе вĕсем ĕçре ытти колхозниксене хавхалантарса пыраççĕ. Вĕсем пурте агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

МТС çумĕнчи пуçламĕш парторганизацире те партиллĕ-политикăллă ĕçе аван организациленĕ. Çавна пула МТС тырпула комбайнсемпе пухса кĕртмелли плана 118 процент тултарнă. Коммунист Макаров юлташ ертсе пыракан трактор бригади çулталăк планне срокченех тултарнă. Çак бригадăри комсомолец-трактористсем Г. Иванов, М. Афанасьев юлташсем плана 139 процент пурнăçланă. Кашни бригадăрах агитаторсем пур, стена хаçачĕсем тухаççĕ. МТС çумĕнче тухса тăракан стена хаçачĕ (редакторĕ коммунист Шаринов юлташ) çуракипе уборка вăхăтĕнче 8 номер тухнă. Кунсăр пуçне бригадăсенче 38 номер «Боевой листоксем» кăларнă.

Вăрманпромхозри пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Бельский юлташ) партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăхлă ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса туса пырать. Çавна май вăл чугунçул валли вутă хатĕрлесе памалли 5 уйăхри заданине икĕ уйăх çурărах касас енĕпе те, турттарас енĕпе те ирттерсе тултарнă.

Партиллĕ-политикăллă ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Районри парторганизаци хăйĕн йышне ӳстерес тĕлĕшпе питех те начар ĕçлет. Кăçал январь уйăхĕнчен пуçласа çак тарана çитиччен парти членне 19 çынна, парти членĕн кандидатне 16 çынна çеç илнĕ. Ку тĕлĕшпе парти райкомĕн оргинструкторски отделĕ (заведующийĕ Мышкин юлташ) çителĕксĕр ĕçлет. Ĕç уйрăмах парти кандидатĕнче тăмалли стаж тухнисене члена куçарас тĕлĕшпе начар тăрать. Вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕ июнь уйăхĕнче парти кандидачĕсемпе пĕр канашлу ирттернĕччĕ. Ун хыççăн 3 çын парти членне куçма заявлени панă, вĕсене парти членне куçарнă. Çавăн пек канашлусене тăтăшах ирттерсе пынă пулсан, районра пысăк стажлă кандидатсем чылайĕшĕ парти членне куçма пултарнă пулĕччĕç. Парти кандидачĕсем хушшинче сахал ĕçленĕ пирки районри парторганизацинче халĕ стаж иртнĕ парти кандидачĕсем 62 çын шутланаççĕ.

Парти кандидачĕсем хушшинче уйрăмах Кĕлĕмкассинчи, Туçари пуçламĕш парторганизацисенче начар ĕçлеççĕ. Асăннă парторганизацисенче кашнийĕнчех пысăк стажлă парти кандидачĕсем 3—4 çын шутланаççĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче парти пухăвĕсене ирттересси çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Колхозсенчи парторганизацисем пухусенче ытларах хуçалăх ыйтăвĕсене сӳтсе-яваççĕ, политикăллă ыйтусене вара айккине пăрса хăвараççĕ. Хурамалти территориальнăй парторганизацире (секретарĕ Патова юлташ) кăçал ирттернĕ пухусенче сӳтсе-явнă 13 ыйтуран 8 ыйтăвне политикăллă ыйтусемпе çыхăнтарман. Промышленность предприятийĕсенчи парторганизацисенче вара хуçалăх ыйтăвĕсем çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Буинскри сланец рудникĕнчи пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Егоров юлташ) кăçалхи пухусенче сӳтсе-явнă 11 тĕп ыйтуран хуçалăх енĕпе 5 ыйту кăна сӳтсе-явнă. Буинскри вăрман заводĕнчи пуçламĕш парторганизацире те çавнашкалах.

Партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатмалла, ăна хуçалăхлă ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса туса пымалла.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Пушкин юлташăн цехĕ малта

КУСЛАВККА, октябрĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Комбинатри цехсен Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăвĕнче Пушкин юлташ начальник пулса ертсе пыракан цех лайăх ĕçлет. Цех коллективĕ çĕнĕ йышши продукцие туса кăларас ĕçе хăвăрт вĕренсе пырать. Çак ĕçре уйрăмах мастер Курбатов юлташ пысăк пултарулăх кăтартать. Унăн участокĕнчи рабочисемпе работницăсем пурте пекех нормăран ирттерсе ĕçлеççĕ. Береговой, Тихонов столярсем сменăри заданисене кашни кун вăтамран 250 процент тултараççĕ.

Цех хăйĕн октябрь уйăхĕнчи производство планне çак кунсенчех вĕçлет.

Г. КИРШТЕЛЬ,
Ĕç отделĕн начальникĕ.

Кĕрхи çĕртме ĕçĕ вăйланчĕ

СЕНТЕРВАРРИ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем социализмлă ăмăртăва малалла вăйлантарса пырса, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçĕн хăвăртлăхне чылай ӳстерчĕç. Районра пурĕ 19 колхоз кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарнă. Колхозсем çак кунсенче лайăхланнă çанталăкпа туллин усă курса юлма тăрăшаççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ нумай хут ӳсрĕ. Атлашево, Пустынькасси, Анатри Магазеево, Тутикасси колхозĕсем хăйсене панă нормăсене ытлашшипех тултарса сухалаççĕ. Новински колхозĕнче пĕр лаша пуçне пĕрер гектар тăваççĕ. Кĕрхи çĕртме тумалли плана районĕпе 75,2 процент пурнăçа кĕртнĕ.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çанталăк лайăхланнă майпа колхозсене ĕçлекен мĕнпур лашасен 75 процентне кĕрхи çĕртме тунă çĕре мобилизацилеме кăтартса панă. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çавна май кунран-кун ӳссе пырать. Халĕ кĕрхи çĕртме сухинче куллен районĕпе пурĕ 600—650 лаша ĕçлет.

Çав вăхăтрах сӳрĕккĕн ĕçлекен колхозсем те пур-ха. «Социализм» колхозра 7 лашапа кунне 1,5 гектар кăна сухалаççĕ. Колхоз председателĕ çакна чипер йĕркеллĕ ĕçех тесе шутлать пулас, вăл ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшмасть.

К. РОСТОВЦЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ăмăрту сарăлсах пырать

КАЛИНИНО, октябрĕн 27-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту вăйлансах пырать. Нумай колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Октябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне район кĕрхи çĕртме тумалли плана 60,4 процент тултарчĕ. Шинерти «1-ое Мая», Епшикри «Пучах», Хăмăшри Папанин ячĕпе тăракан, Кивкассинчи «Большевик» тата ытти колхозсем (пурĕ 12 колхоз) кĕрхи çĕртме тумалли пана лашасен вăйĕпех ăнăçлăн пурнăçларĕç.

«Чăваш Коммуни» колхозăн хирĕсенче кĕрхи çĕртме сухинче кулленех 30—40 лаша ĕçлет. Колхозниксемпе колхозницăсем кунран-кун нумайрах сухаласшăн тăрăшаççĕ, çав вăхăтрах ĕçĕн пахалăхне те лайăх тытса пыраççĕ. Колхозăн кăçал кĕрхи çĕртмене 270 гектар туса хăвармалла, паянхи куна 220 гектар сухаланă.

Малта пыракан колхозсем кăçал кĕрхи çĕртмене планпа пăхнинчен ытларах туса хăварассишĕн тăрăшаççĕ. «Пучах» колхоз планран ирттерсе—14 гектар сухаланă, «Большевик» колхоз—5 гектар, Уйкасри «Комсомолец» колхоз—3 гектар сухаланă.

Районри колхозсем Октябрь уявне кĕрхи çĕртме тумалли государство планне тултарнипе кĕтсе илесçĕ. Ку обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн халĕ колхозсенче хĕрӳ ĕç пырать. Лашасене май килнĕ таран йăлтах кĕрхи çĕртме ĕçне кӳлеççĕ. Колхоз председателĕсем çак ĕçе халь уйрăмах лайăх организацилесе пыма тивĕçлĕ. Сухаçăсен ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, вĕсене ăнăçлăн ĕçлеме пур майсем те туса памалла. Ĕçе çапла организацилесе пынипе район Октябрь уявĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе вĕçлет.

М. ЛОГИНОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Районри ялхуçалăх выставкин участникĕсем

КАЛИНИНО. Районри ялхуçалăх выставкинче чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕнчи лайăх тĕслĕхсене кăтартса пама хатĕрленеççĕ. Выставка комитечĕ 21 колхозран выставкăра кăтартма 28 экспонат çирĕплетнĕ.

Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхоз (председателĕ И. Капитонов юлташ) выставкăра тĕштырă тата махорка тухăçлăн туса илнине кăтартса парать. Колхоз 33 гектарлă участокра кашни гектартан вăтам шутпа 15,70-шер центнер пăрçа туса илнĕ. Çав колхозрах А. Кулаевская юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригада 6,5 гектарлă участокра кашни гектартан 18-шар центнер пăрçа туса илнĕ. Соловьев юлташ ертсе пыракан звено 8 гектар çинче вăтамран 16,30-шар центнер махорка туса илнĕ. Колхоз выставкăна хатĕрленнĕ май государство умĕнчи тырă, пахча-çимĕç обязательствисене парса татрĕ, авăн çапса пĕтерчĕ.

Юманайри Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз выставкăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вĕсен продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсене каласа парать. Е. Тимофеева юлташ колхозра 1942 çулта çуралнă пăрусене пурне те лайăх пăхса ӳстернĕ. М. Иванова свинарка 6 ама сыснаран кашнинчен 24-шар çăвăр илнĕ. Е. Мокеева, Е. Павлова дояркăсем хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесенчен планпа пăхнинчен ытларах сĕт суса илнĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетмелли 1942 çулхи плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта обязательствисене 1942 çулшăн тахçанах парса татнă.

Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз выставкăра государствăна брынза-чăкăт туса парас енĕпе лайăх ĕçленине кăтартса парать. Колхозăн государствăна кăçал 22,55 килограмм брынза-чăкăт туса памалла пулнă. Паянхи куна колхоз 130,2 килограмм лайăх сортлă брынза туса панă.

Районри ялхуçалăх выставкинче Çĕньялти «Правда», Элменти Пушкин ячĕпе тăракан, Чулкаçри «Смычка», Услапари «Броневик» колхозсем те хăйсен паха ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Комсомолецсем лайăх ĕçлеççĕ

ЕТĔРНЕ. Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышне вăйлăн ĕрчетесси, вĕсен продуктивноçне ӳстерсе пырасси — фронтпа тăван çĕршыва аш-какай, сĕт-çу, çăм, тир нумайрах туса парас ĕçпе çыхăнса тăрать. Çакна Алексеевкăри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем лайăх ăнланаççĕ, колхозри выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ӳстерессишĕн вĕсем пуçаруллăн ĕçлеççĕ.

«Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем 4. Фермăсен заведующийĕ пулса комсомолец П. Краснов ĕçлет. Комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕ те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, колхозăн фермисенче большевикла йĕркелĕх тăвас ĕçпе кулленех интересленет, чылай ĕçсене комсомолецсен вăйĕпе туса ирттерет.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Çамрăк дояркаскотницăсем М. Фроловăпа М. Ильина юлташсем кăçал кашни ĕне пуçне планпа пăхнинчен 20—30 процент ытларах сĕт суса илнĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕхне хĕл каçарма кирлĕ условисем туса парас ĕçе хăйсем çине илнĕ. Витесене тасатнă, юсанă, ăшăтнă. Комсомолецсен вăйĕпе кăçал 40 ĕне вырнаçтарса усрамалăх витене тĕпренех юсаса çĕнетнĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем воскресник организацилесе выльăх-чĕрлĕхсем валли 40 тонна силос хывнă.

Н. ЯКОВЛЕВ,
«Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозри комсомол организацин секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Совет Союзне пулăшакан комитетри нациллĕ секцисен конференцийĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йорк хулинче вăрçăра Совет Союзне пулăшу парса тăракан американецсен комитетĕнчи нациллĕ секцисен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференцире 300 делегат пулнă, вĕсене 25 национальноçсен тĕрлĕрен организацийĕсем суйласа янă.

Францин авиаци министрĕ пулнă Пьер Кот тухса каланине конференци участникĕсем хĕрӳллĕн саламласа хапăл тунă. Пьер Кот çапла каланă: Совет Союзне вăйлăн пулăшас тесен, иккĕмĕш фронт уçас пулать, тенĕ. Вăрçăра Совет Союзне пулăшу парса тăракан комитета кĕрекен ютçĕршыв çыннисен комитечĕн хисеплĕ председателĕ, Нью-Йорк штачĕн губернатор заместителĕ Полетти çав конференцире çапла тухса каланă: «Эпĕ союзниксене — Сталинграда чаплăн хӳтĕлекенсене тата вырăссен фронтĕнче çапăçакан ытти боецсене те вĕсен умĕнчи питех те пысăк парăма татарса пама чĕнетĕп», тенĕ. Çавăн пекех конференцире Америкăри славянсен конгресĕн председателĕ Кроницкий, Арктика исследователĕ Стефансон тата радиокомментаторсем тухса сăмах каланă. Вăрçăра Совет Союзне пулăшса пыракан французсен тата голландецсен комитечĕсен представителĕсем те конференцире пулнă.

Лондонра пысăк митинг пулса иртнĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 25-мĕшĕнче Лондонра Трафальгар-Сквер ятлă площадьре иккĕмĕш фронт уçас лозунгпа пысăк митинг пулса иртнĕ. Митингра 50 пин çын пулнă. Парламент членĕсем — лейбористсем Бивен, Гест тата ыттисем те сăмах тухса каланă. Вĕсем пурте союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен Европа континентĕнче сарлака наступлени организацилесе ямалла тесе каланă.

Греци çĕршывĕ фашистла оккупантсен пусмăрĕ айĕнче

ЖЕНЕВА, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Греци çине ултавлăн пырса тапăннăранпа ыран икĕ çул тултарать. Çавăн пек тапăннине пула Грецие Италипе Германин вăрăхурахла войскисем оккупациленĕ. Фашистла оккупантсем çĕршывра тискер террорăн, çаратупа пусмăрлăхăн ирсĕр йĕркине туса хунă. Турцин «Реалите» журналĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италипе Германи оккупанчĕсем хăйсем Грецие тытса илнĕ хыççăн малтанхи эрнесенчех 150 пин грека персе пăрахса, тĕрмесемпе концентрациллĕ лагерьсенче асаплантарса вĕлернĕ. Грецин 23 хулине вĕсем çĕрпе танлаштарнă.

Турцин «Улус» хаçачĕ çапла çырать: «Афинăра, Пирейра, Пелопоннесра тата ытти нумай утравсем çинче курăнакан картинăсем чуна ыраттараççĕ. Çынсем выçăпа пĕтсе çитнипе пынă çĕртех ӳке-ӳке вилеççĕ. Выçлăх çумне тата тумтирсемпе урана тăхăнмаллисем çитменни хутшăнать. Урамсем тăрăх пиншер çынсем ыйткаласа çӳреççĕ».

Анчах оккупантсем Греци халăхĕн хирĕç тăрас вăй-хăватне выçлăхпа та, терророа та хавшатма пултараймаççĕ. Мĕнпур çĕршывра оккупантсене хирĕç пыракан партизанла вăрçă çулăмĕ сарăлса кайнă. Грецин тĕрлĕ районĕсенче халĕ партизансен пысăк отрячĕсем кĕрешеççĕ. Çав отрядсен речĕсенче 30 пин çын ытла тăраççĕ. Оккупантсем вĕсене пĕтерме хăтланни ăнăçсăр путланса пырать. Хӳтĕлĕхсĕр халăха массăллăн асаплантарса, персе вĕлернине хирĕç протестлесе Афинăра тата Пирейра массăллă забастовкăсем тунă.

Грецин хулисемпе ялĕсенче çĕршывăн патриочĕсем оккупациллĕ влаçсен мероприятийĕсене хирĕç саботаж тăваççĕ, Италипе Германин войскисене турттарса пыракан эшелонсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере яраççĕ, кĕперсене аркатса сирпĕнтереççĕ, Германипе Итали çарĕсем валли продукци туса хатĕрлекен предприятисене стройран кăлараççĕ, Германипе Итали оккупанчĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Афинăра тата Пирей портĕнче пысăк забастовкăсем пуçланнă. Оккупациллĕ влаçсен ирĕксĕрех войскăсем чĕнсе илмелекнĕ. Забастовкăна хутшăннисене 800 çынна арестленĕ. Вĕсенчен виççĕшне асаплантарса вĕлернĕ. Чылайĕшне нумай çуллăха тĕрмене хупмалла тунă. Забастовкăна хутшăннă 11 пине яхăн çынна ĕçрен кăларса янă. Пĕр эрнене пынă çав забастовкăсем оккупациллĕ влаçсен ĕçĕсене хирĕç протестлеме пухăннă урамри демонстрацисенчен пуçланнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ИСПАНИРЕ ХУÇАЛАННИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Мексикăра тухакан «Эспано популяр» хаçат çапла пĕлтерет: нимĕçсем Испани промышленноçĕн чи кирлĕ отраслĕсене контроль туса тăрассине юлашки уйăхсем хушшинче чылай вăйлатнă. Рейносри, Бильбаори, Валенсири, Барселонăри, Эль-Ферролри, Кадиксри тата Севильйăри верфьсем Германи валли подводнăй лодкăсемпе суту-илӳ суднисем тăваççĕ. Барселонăри «Испано-Сюиза» завод нимĕçсем валли авиаци моторĕсем туса кăларать. Испани çĕршывĕнчи мĕнпур сăрт-ту тата çар промышленноçне нимĕçсем пĕтĕмĕшпе хăйсен аллине тытса илнĕ. Германи промышленникĕсем сăрт-ту промышленноçне тытса пыракан «Монтес де Галисия» корпораци тунă. Çав корпораци хăйĕн аллинче сăрт-ту тата хими промышленноçĕн 311 предприятине хăйĕн аллинче тытса ĕçлеттерет.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, Испанин промышленность министерстви нимĕçсене Испанири шахтăсемпе заводсене эксплоатацилеме çавтери пысăк льготăсем парать. Гитлеровецсем Андалузире, Эстремадурăра, Астурире, Басконире, Галисире çĕнĕ аэродромсем тунă. Сант-Яго де Компостела çывăхĕнчи Альдея де Бастелья хулинче нимĕçсем авиаци базине туса хунă. Варас хули çывăхĕнче (Лакорунья) пысăк аэродром тунă, çав аэродром çинчен Германи самолечĕсем вĕçсе хăпарса Англи суднисем Атлантика тинĕсĕнче кусса çӳренине сăнаса тăраççĕ.

Гестапо агенчĕсем Андалузире, Алхисерасра, Мелильере тата Танжерта хăйсен ĕçне вăйлатнă. Фалангистсем вĕсене Америкăпа Англин Атлантика океанĕпе Вăтаçĕр тинĕсре çӳрекен суднисен караванĕсене сăнаса тăма пулăшаççĕ.

Испани влаçĕсем Германие продовольстви нумай ярса тăраççĕ. Суту-илӳ суднисем 200 ытла олива çăвĕ, рис, апельсин, тулă, бобы тата промышленность продукчĕсем турттарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Нимĕçсем çĕршыва çавăн пек çаратса пĕтернĕ пирки Испанири пурнăç условийĕсем хăрушла йывăр: хĕрарăмсемпе ачасем тăтăшах выçă лараççĕ.

Нимĕçсем Испанире çавăн пек хуçаланнă пирки халăхăн анлă массисем питĕ тарăхаççĕ. Партизанла отрядсен кĕрешĕвĕ вăйлансах пырать. Рабочисем заводсенче продукци туса кăларассине чарса тăраççĕ. Германие хирĕç тăвакан саботаж анлăн сарăлнă. Хресченсем хăйсен тырпулне туртса илессинчен пытараççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 27 мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 25-мĕшĕнче японецсем американецсен Гвадалканар утравĕ çинчи позицийĕсем çине тинĕсрен çинчен, тинĕсрен тата сывлăшран атака пуçласа янă. Америка войскисем тата авиацийĕ противникпа кунĕпех вăйлăн çапăçнă. Флорида утравĕнчен çурçĕререхре Японин çар карапĕсемпе кĕрешекен Америкăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем Японин икĕ крейсерне сиенленĕ. Японецсен 22 самолетне персе ӳкернĕ.

Октябрĕн 26-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕ Гвадалканар утравран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Японин тинĕс-çар вăйĕсен пысăк отрячĕпе çапăçнă. Американецсен «Портер» ятлă эсминецĕ путнă. Ку операци çинчен тĕплĕн пĕлтерекен хыпарсене илеймен-ха. Çапах та японецсен 2 авианосецне сиенленĕ паллă.

ТОКИО, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Император ставки паян пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: октябрĕн 26-мĕшĕнче Японин флочĕ Санта-Курс утравĕсенчен çурçĕртерехри вырăнта (Соломон утравĕсенчен хĕвелтухăçнерехре) Америка флочĕн соединенийĕсемпе çапăçнă. Коммюникере каланă тăрăх, американецсен 4 авианосецне, пĕр линкорне тата тепĕр çар карапне путарнă. Унсăр пуçне тата тепĕр линкора, виçĕ крейсера, пĕр эсминеца чылаях сиенленĕ. Американецсенне 200 самолет ытла персе ӳкернĕ. Японецсенне 2 авианосеца тата пĕр крейсера кăштах сиенленĕ. Японецсен 40 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тресту Чувашлесзаг требуются:

для работы в Чебоксарах: бухгалтер-ревизор, специалист лесозаготовок, экономист-статистик, шофер, машинистка и для работы в райлесзагах: Кувакинском, Комсомольском, Октябрьском — старшие бухгалтера.

С предложением обращаться: Чебоксары, Канашская, № 7, Чувашлесзаг.

Чувашской республиканской конторе Главзаготскот Центра требуются: начальник планово-финансового отдела, начальник сбыта и транспорта, инспектор госзакупок, экономист, бухгалтера-ревизоры.

Обращаться: г. Чебоксары, ул. Канашская, 21. Тел. 6—12, 2—.4.

Çамрăк рабочисене куллен вĕрентсе ӳстерес пулать

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн фабрикăсемпе заводсене халичченхи промышленность ĕçне пачах пĕлмен çамрăксем нумай хутшăнчĕç. Вĕсем — пирĕн промышленноçăн малашлăхĕ, унăн пулас кадрĕсем. Çавăнпа вĕсене куллен вĕрентсе, ӳстерсе пыни кирлĕ.

Анчах Çĕмĕрлери «Большевик» заводра çамрăк рабочисене вĕрентес, политикăллă воспитани парас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен-ха. Ку ĕç тĕлĕшпе йăлтах цех начальникĕсем çине шаннă пулас. Çамрăк рабочисем хушшинче ĕçлеме уйрăм агитаторсем уйăрман. Цех начальникĕсем вăхăт çитеймен пирки е тата ытти сăлтавсене пула çамрăк рабочисене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, электроцехра (начальникĕ Дорофеев юлташ), механически цехра (начальникĕ Николаев юлташ) пĕр уйăх хушши ĕнтĕ пĕр калаçу та пулса иртмен. Цехсенче стена хаçачĕ, боевой листоксем кăларассине организацилемен. Заводри стена хаçачĕ те июнь уйăхĕнчен вара тухман ĕнтĕ.

Комсомолăн заводри пуçламĕш организацийĕ те çамрăк рабочисем хушшинче начар ĕçлет. Партин заводри пуçламĕш организацийĕпе ВЛКСМ райкомĕ ăна кулленхи ĕçре пулăшса, ертсе пымаççĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Буравин юлташ кăçал ку таранччен заводри организацире пĕрре те пулман.

Политикăллă воспитание çителĕксĕр йĕркеленине пула çамрăк рабочисем ĕç дисциплинине пăсни час-часах пулать. Заводри 191 çĕнĕ рабочирен 72 çын ĕç дисциплинине пăснă, вĕсенчен 35 çынна судпа айăпланă.

«Большевик» заводра çамрăк рабочисене производствăна вĕрентес ĕçе те начар йĕркеленĕ. Çамрăк рабочисене уйрăм мастерсем, квалификациллĕ рабочисем çумне çирĕплетнĕ. Ку пит аван. Анчах уйрăм рабочисем çумне çирĕплетнĕ çамрăк ачасем нумай вăхăт хушши вĕренеççĕ. Сидоровпа Баранов юлташсем 1942 çулхи июнь уйăхĕнчен вара вĕренекенсем шутланаççĕ. Сидоров юлташа кăçалхи августăн 15-мĕшĕнче тин 3-мĕш разрядлă слесарь пулса ĕçлеме ирĕк панă. Баранов юлташ паян кунччен те мастерпа пĕрлех ĕçлет-ха. Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн çамрăк рабочисене испытани тыттармаççĕ, квалификациллĕ комисси вĕсене тĕрĕслемест. Ун пек комисси заводра юлашки вăхăтра пачах çук. Çавăн пекех заводра техминимум кружокĕсемпе стахановла шкулсем те ĕçлемеççĕ. Ĕç нормисене тултарайман рабочисене пулăшас тĕлĕшпе производствăллă канашлусем туса ирттермеççĕ. Квалификациллĕ рабочисен лайăх опычĕсемпе çамрăк рабочисене паллаштарас ĕçе йĕркелемен. Завод графика тултарса пырайманни çакăнтан та килет ĕнтĕ.

«Большевик» заводăн дирекцийĕпе завкомĕ рабочисене ĕçлеме тата пурăнма кирлĕ пек условисем туса паман. Хăшпĕр цехсенче питех те вĕри пулать, ăшă 70 градуса çитет. Унта вентиляци пур, анчах вăл ĕçлемест. Çавăнпа рабочисем час-часах аптăраççĕ.

Заводри хăшпĕр çамрăк рабочисен çие, урана тăхăнмалли спецтумтирсем çук. Акă зольщиксенех илер. Завод кирлĕ пек тăхăнтарман пирки, вĕсем хăйсен пушмакĕсемпех вĕри шлаксене тасатаççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри сиен курать.

Çамрăк рабочисем пурăнакан çуртсемпе пӳлĕмсенче те йĕрке çук-ха. Вĕсем мĕнле пурăннипе сахал интересленеççĕ. Юлашки 2 уйăх хушшинче общежитисене дирекцирен, завкомран, партипе комсомол организацийĕсенчен пĕр çын та кайса пăхман. Пӳлĕмсенче пурнăçра кашни кун кирлĕ хуçалăх хатĕрĕсем (витре, курка тата ытти те) çитмеççĕ. Çамрăк рабочисем вăхăта усăллă иртерес вырăнне кирлĕ мар ĕçсем енне сулăнаççĕ.

Çамрăксенче пысăк вăй. Вăл вăйпа тĕрĕс усă курас пулать. Вĕсене куллен вĕрентсе, ертсе пымалла. Çакă вара партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен чи хисеплĕ ĕçĕ пулмалла. «Большевик» заводăн руководителĕсем çавна ăнланса илме тивĕç. Çамрăк рабочисене вĕрентес тата вĕсене политикăллă воспитани парас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла.

РУЧНОЙ ПУЛЕМЕТА ВĔРЕНЕÇÇĔ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Осоавиахимăн райсовечĕ кăçал Хĕрлĕ Çар валли сахал мар стрелоксемпе пулеметчиксем, гранатометчиксем хатĕрлерĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсенчен чылайĕшĕ фронтра, тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ.

Çар ĕçне хĕрачасем те пысăк тимлĕхпе вĕренеççĕ.

Нумай пулмасть осоавиахим райсоветне çамрăк хĕрсем Шабина, Юрова, Кардовильцева юлташсем пынă.

— Эпир тылра ĕçлеме çеç мар, фронтра та пысăк усă пама пултаратпăр. Çавăнпа пире çар ĕçне вĕрентме ыйтатпăр, — тенĕ вĕсем.

Осоавиахим райсовечĕ организациленĕ курссенче кăçал сахал мар хĕрачасем радисткăсемпе телефонисткăсен ĕçне вĕреннĕ. Улхаш колхозĕнче çеç 100 хĕрача ытла сандружинницăсен курсĕнчен вĕренсе тухнă.

Осоавиахим райсовечĕ халĕ хĕрачасем ыйтнипе ручной пулеметчиксен курсне организациленĕ. Унти занятисене предприятисемпе учрежденисенчи хĕрачасем йĕркеллĕн çӳреççĕ.

Х. ЛИСИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11244 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.